25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус

1942 НОЯБРЬ 4 ЮНКУН 258 (6193) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Совет çĕршывĕшĕн çапăçăва Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсен ывăлĕсем кĕреççĕ! Сывă пултăр Хĕрлĕ Çар—ССР Союзĕнчи халăхсен тăванлăхĕпе туслăхĕн çарĕ!

(Октябрьти социализмлă Аслă революци XXV çул тултарнă тĕле ЦК ВКП(б) кăларнă лозунгсенчен)

ВКП(б) Обкомĕнче

Саратов облаçĕнчи Куриловски районри колхозниксемпе колхозницăсем хăйсен хуçалăхĕнчи пахча-çимĕçĕн пĕр пайне фабрикăсемпе заводсенчи рабочисем валли государство хакĕпе сутас ĕçе пуçарнă. Çак патриотла пуçарăва Шупашкар районĕнчи Иккасси ялсоветĕнчи «Майăн 1-мĕшĕ» ялхуçалăх артелĕн членĕсем пысăк çĕкленӳпе сӳтсе-явса йышăнса илнĕ. Вĕсем пĕр заводăн рабочийĕсене сутма пĕр кун хушшинчех 358 пăт çĕрулми тата пахча-çимĕçсем пухнă. Çак ĕç валли колхозницăсем В. Васильева 8,5 пăт çĕрулми тата пахча-çимĕç, А. Ананьева — 9,5 пăт çĕрулми, колхоз председателĕ Д. Куприянов тата колхоз бригадирĕ Е. Васильев 9-шар пăт çĕрулми государство хакĕпе сутнă.

«Майăн 1-мĕшĕ» ялхуçалăх артелĕн членĕсем Чăваш республикинчи мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене хăйсен примерне йышăнса илме чĕнсе çыру çырнă.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕ Шупашкар районĕнчи Иккасси ялсоветĕнчи «Майăн 1-мĕшĕ» колхоз членĕсен чĕнĕвне ырланă. ВКП(б) райкомĕсен секретарĕсене, тата машинно-тракторнăй станцисен политотдел начальникĕсене Саратов облаçĕнчи Куриловски районри колхозниксен паха пуçарăвĕ çинчен колхозниксене анлăн ăнлантарса пама тата фабрикăсемпе заводсенчи рабочисене государство хакĕпе сутма ялхуçалăх продукчĕсемпе пахча-çимĕçсем пухса хĕрлĕ обозсем организацилеме хушнă. Республикăри тата районсенчи хаçатсен редакторĕсене Куриловски районри колхозниксемпе колхозницăсен пуçарăвне йышăнса пурнăçлани çинчен тăтăшах хаçатсенче çутатса тăма хушнă.

Шупашкар районĕнчи Иккасси ялĕнчи „Майăн 1-мĕшĕ“ колхоз колхозникĕсемпе колхозницисем Чăваш республикинчи мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсем патне çырнă çыру

Эпир халĕ отечественнăй вăрçăн йывăр кунĕсене пурăнса ирттеретпĕр: фашистсем пирĕн уйхирсене таптаççĕ, пирĕн колхозсене, çуртйĕрсене тата шкулсене аркатаççĕ. Нимĕç захватчикĕсем пире пусмăрлăха кĕртесшĕн, вилĕм кӳресшĕн, 25 çул каялла Октябрьти революцире çапăçса илнĕ ирĕклĕхе пĕтересшĕн. Эпир, колхозниксемпе колхозницăсем, Сталин юлташ хăйĕн майăн пĕрремĕшĕнчи приказĕнче тата ноябрĕн 6-мĕшĕнче каланă сăмахĕнче: колхозниксем фронтпа çĕршыва тырпул, апкакай тата промышленность валли чĕртавар ытларах та ытларах пама тивĕçлĕ тесе каланине пурнăçа кĕртсе, колхозниксемпе колхозницăсен тăван çĕршыв умĕнчи парăмне ăнланса, Куриловски районри «Революци», Молотов ячĕпе тăракан колхозсен членĕсен чĕнĕвне сӳтсе-яврăмăр, фронтшăн ырмиканми ĕçлекен пĕр заводри рабочисене продуктсем тата пахча-çимĕçсем уйăрса парса пулăшас, терĕмĕр. Эпир ĕнтĕ 200 пăт çĕрулми, 91 пăт купăста, 14 пăт сухан, кишĕр тата хĕрлĕ кăшман пуçтарса, вĕсене пĕр завода государство хакĕпе сутрăмăр. Пахча-çимĕçсем пухас ĕç малалла пырать. Эпир Шупашкар районĕнчи тата Чăваш республикинчи мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене пирĕн пуçарăва йышăнма ыйтатпăр.

Колхозниксемпе колхозница юлташсем, пирĕн рабочисем малашне те икĕ виçĕ хут тухăçлăрах ĕçлесе, нимĕçсен фашистла варварĕсене хăвăртрах аркатса тăкма фронта мĕн кирлине пурне те парса тăччăр, тесе тăрăшар. 25 çул каялла пирĕн аттесемпе пиччесем хăйсен юнĕсене юхтарса çапăçса илнĕ тăван çĕршыв умĕнче парăмлă пулар мар.

Сывă пултăр пирĕн тăван Совет çĕршывĕ!

Сывă пултăр пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар!

Сывă пултăр пирĕн çулпуç, аслă полководец Сталин юлташ!

Мĕнпур вăя — нимĕçсен оккупанчĕсене çĕмĕрсе тăкма!

Колхозниксен пĕрлешӳллĕ пухăвĕ хушнипе ала пуснă:

Колхоз председателĕ КУПРИЯНОВ.

Иккассинчи пуçламĕш парторганизаци секретарĕн заместителĕ ГРИГОРЬЕВ.

Колхозниксем: Х. АНДРЕЕВА, М. ГРИГОРЬЕВА, ПЕТРОВА, АЛЕКСАНДРОВА.

Государствăна тырă парас ĕçе тĕпренех вăйлатмалла

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăннă хыççăн, республикăри малта пыракан колхозсем ялхуçалăхĕнчи ĕççене нумай хут хăвăртрах тата лайăхрах тума тытăнчĕç. Ялхуçалăхĕнчи ытти ĕççемпе пĕрлех, государствăна тырă парас ĕçе те вĕсем чи малти вырăна хураççĕ, Октябрьти социализмлă Аслă революци 25 çул тултарнă уява государство умĕнчи обязательствăсене парса татнипе кĕтсе илме тăрăшаççĕ.

Шупашкар районĕнчи чылай колхозсем государствăна 1942 çулшăн тырă парса татнă. Ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне район обязательнăй йĕркепе памалли тырăн 1942 çулти планне 80,7 процент пурнăçланă, МТС ĕçĕшĕн тухакан натуроплата тыррине тата Хĕрлĕ Çарăн фондне хумалли тырра планран ирттерсе парса татнă. Пĕтĕмĕшпе илсен, район государствăна тырă парас тĕлĕшпе кăтартуллăн ĕçлет. Çак ĕç тавра районри хăшпĕр колхозсенче агитациллĕ-ăнлантарулла ĕçе вăйлатсан тата ĕçе малалла та çирĕп организацилесе пырсан, Шупашкар районĕнчи колхозсем Октябрьти Аслă уява государствăна тырă парса татнипе паллă тума пултараççĕ. Ку вăл тăван çĕршывпа фронт интересĕсемшĕн районри колхозсем кăтартуллăн ĕçленине кăтартса паракан лайăх тĕслĕх пулса тăрать.

Республикăри районсенчен государство умĕнчи тырă обязательствисене парса татас тĕлĕшпе Ишлей, Куславкка, Çĕмĕрле, Вăрмар районĕсенчи колхозсем те начар мар ĕçлеççĕ. Ишлей районĕ государствăна тырă памалли плана пурĕ 82,8 процент, Куславкка районĕ 73,8 процент, Çĕмĕрле районĕ 71 процент, Вăрмар районĕ 69,5 процент пурнăçланă.

«Заготзерно» пункчĕсене тырă леçес тĕлĕшпе иртнĕ пилĕккунлăхра пуринчен те лайăхрах Çĕрпӳ районĕнчи колхозсем ĕçлерĕç. Вĕсем октябрĕн 25-мĕшпе ноябрĕн 1-мĕшĕ хушшинче хатĕрлев пунктне 393 тонна тырă леçсе панă. Иртнĕ пилĕк кун хушшинче ку тĕлĕшпе Тăвай, Комсомольски, Сĕнтĕр, Елчĕк районĕсем те чылаях пысăк çитĕнӳ тунă.

Анчах та государствăна 1942 çулта тырă парас тĕлĕшпе республикăри колхозсем нумай хут лайăхрах ĕçleme тивĕçлĕ. Государствăна тырă парас ĕç халĕ те нумай районсенче сӳрĕккĕн пулса пырать, районри партипе совет организацийĕсем енчен çак пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕçе тивĕçлипех вăйлăн çĕклесе пыни кирлĕ.

Государствăна тырă хатĕрлесе парас плана ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне Чăваш республикинчи колхозсем çуррине ытларах çеç пурнăçланă-ха. Натуроплата шучĕпе тухакан тата Хĕрлĕ Çарăн тырă фондне хумалли тырра парас тĕлĕшпе ĕç татах та начартарах тăрать. Уйрăмах Шăмăршă, Кувакино, Первомайски, Пăрачкав районĕсенчи колхозсем юлса пыраççĕ. Государствăна тырă парас ĕçе Елчĕк районĕнчи колхозсен те нумай хут вăйлатмалла. Хатĕрлев пункчĕсене тырă леçсе парасси вăйланса пырас вырăнне Чкаловски районри колхозсенче вăл сӳрĕкленсе пырать.

Государствăна тырă хатĕрлесе парас ĕçе тĕпренех вăйлатмалла. Ку тĕлĕшпе кая юлса пыма нимĕнле сăлтавсем те çук. Кĕске вăхăтрах республикăри кашни колхозăн государство умĕнчи тырă обязательствисене парса татмалла.

УЯВ УМĔНХИ КУНСЕНЧЕ

ЕТĔРНЕ (Телефонпа). Сталин ячĕпе тăракан артель коллективĕ, Октябрь уявне тивĕçлипе кĕтсе илме хатĕрленсе, иртнĕ уйăхри ĕç планне 103 процент тултарчĕ. Уяв умĕнхи кунсенче артелĕн рабочисемпе работницăсем пысăк çĕкленӳпе ĕçлеççĕ. Кĕпе-йĕм çĕлекенсем М. Львов, В. Абрамов, О. Абакумова тата А. Шепетова юлташсем хăйсен нормисене 150—200 процент тултараççĕ.

И. ЛЬВОВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Ноябрĕн 2-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Ноябрĕн 2-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противникпа **Сталинград** районĕнче тата **Туапсерен** çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре кĕрешнĕ. Пирĕн войскăсем **Нальчик** хулинчен тухса кайнă, çапăçусем çав пунктран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пыраççĕ. Ытти фронтсенче нимĕнле улшăну та пулман.

* * *

Ноябрĕн 1-мĕшĕнче пирĕн авиаци фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче противникăн 9 танкĕпе бронемашинине тата войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 50 çити автомашинине пĕтерсе тăкнă, артиллерин тата минометсен 5 батарейине пусарса лартнă, ўнăн хуралта сӳрекен карапне путарнă тата пĕр транспортне сиенленĕ.

* * *

Сталинград районĕнче противник пехотăпа танксен резервĕсене илсе пынă хыççăн хаяр атакăсем тунă. Темĕн пек пысăк çухатусем тӳснине пăхмасăр, нимĕçсем хăйсем ĕнер çухатнă позицисене каялла туртса илесшĕн çапăçаççĕ. Питĕ хаяр çапăçусем пынă, час-часах штык вĕççĕн тытăçса çапăçнă. Сталинграда хӳтĕлекенсем гитлеровецсен пур атакисене те сирсе янă, тăшмана пысăк çухатусем кӳнĕ. Пирĕн пĕр часть пĕчĕк ушкăнсем çине уйăрăлса çапăçнă та нимĕçсене 6 блиндажран çапса кăларнă, вара хăй çав блиндажсенче çирĕпленсе ларнă. Кун каçиччен, туллимар даннăйсем тăрăх, пехотнăй чаççем кăна нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 700 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ. Пирĕн летчиксемпе зенитчиксем противникăн 11 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн разведчиксен ушкăнĕ противникăн тылне кĕрсе кайнă та нимĕçсен фронталла пыракан автоколоннине тапăннă. Снарядсем турттарса пыракан 3 грузовика тата бензин тултарнă икĕ автоцистернăна сирпĕнтерсе янă, зенитнăй установка турттарса пыракан автомашинăна пĕтерсе тăкнă тата 28 гитлеровеца вĕлернĕ. Пирĕн авиаци тапăнса 5 танкпа бронемашина, 4 оруди, 30 автомашина пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ тата сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 5 самолетне персе ӳкернĕ. Пĕр стрелковăй чаçри снайперсем 116 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Нальчикран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн войскăсем, оборонăра тăрса, противникăн наступлени тăвакан танкĕсемпе тата пехотипе хĕрӳллĕн çапăçнă. Пĕр участокра противник атакăна 100 танк ытла автоматчиксемпе пĕрле кĕртсе янă. Çав наступление тума вĕсене 70 самолет пулăшса тănă. Н-ски соединенири артиллеристсем нимĕçсен 11 танкне персе çĕмĕрнĕ. Хаяр çапăçусем хыççăн противникăн йышлăрах вăйĕсем хĕссе пынипе пирĕн чаççем çĕнĕ позицисем çине чакнă.

* * *

Туапсерен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре совет войскисем противника хĕссе пынă. Çак участокри çапăçура нимĕçсен 300 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Н-ски чаçăн боецĕсем пĕр высотана тытса илнĕ, унта гитлеровецсен 149 виллине тупнă. Патронсемпе минăсен 50 ещĕкне, винтовкăсемпе темиçе пулемет туртса илнĕ.

* * *

Çурçĕр-хĕвеланăç фронтĕнче противник пехотăн икĕ полка яхăн вăйĕпе тата 10 танк пулăшса пынипе пирĕн позицисене темиçе хутчен атакăланă. Гитлеровецсен атакине сирсе янă. Пур орудисенчен те персе тăнипе тата пирĕн чаççем контратака тунипе противника пысăк çухатусем кӳнĕ.

* * *

Воронеж фронтĕнче разведчиксем активлăн ĕçленĕ. Старши сержант Иван Баев тата 8 красноармеец противникăн траншейине пырса кĕнĕ те 14 гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ. Документсем, хĕçпăшалсем тата боеприпассем туртса илсе, разведчиксем хăйсен чаçне таврăннă. Кĕçĕн сержант Петр Гричишников тата Бандулла Кароузов красноармеец нимĕçсен виçĕ наблюдателĕ вырнаçнă çурт патне шуса пынă, вĕсем çине гранатăсем пăрахнă. Вĕлернĕ гитлеровецсен хĕçпăшалĕсене разведчиксем хăйсен чаçне илсе пынă. Пирĕн снайперсем противникăн 160 салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Смоленск облаçĕн пĕр районĕнче çапăçакан партизансен отрячĕ противникăн чугунçул çинчи эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Пĕр паровоза тата бронемашинăсем турттарса пыракан 6 платформăна пĕтерсе тăкнă. Смоленск партизанĕсен тепĕр отрячĕ гитлеровецсене турттарса пыракан çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Упĕнтерсе янипе тăшманăн 120 салтакĕпе офицерĕ пĕтнĕ.

* * *

Смоленск облаçĕнчи Касплянски районри Чачу ялне нимĕçсен фашистла мерзавецĕсем тĕпĕ-йĕррипех çунтарса янă, вăл ялта пурăнакан çынсене вĕлерсе пĕтернĕ. Çакăн пек тĕлĕнмелле хăрушă ĕçĕн сăлтавĕ — хресченсем тырпула тата пахча-çимĕçне пĕтĕмпех пама килĕшменни пулса тăнă. Ирхине нимĕçсен карательнăй отрячĕ Чачу ялне йĕри-тавра çавăрса илнĕ те артиллерипе пулеметран пеме тытăннă. Ялта пурăнакан 92 çынтан чĕррĕн пĕр 60 çулти Екатерина Антонова çеç юлнă, ăна та гитлеровецсем суранлатнă.

* * *

Дортмундра (Германия) октябрь уйăхĕнче çĕркăмрăк тиенĕ пысăк баржа путнă. Çакăн пирки гестаповецсем 60 поляк-грузчика арестленĕ. Çав кунах портра ĕçлекен рабочисем — итальянецсем, французсем тата поляксем—ĕçлеме пăрахнă та арестленĕ юлташĕсене хăтарма ыйтнă. Забастовка икĕ кун хушши пынă, гитлеровецсен арестленĕ рабочисене хăтарма тивнĕ.

Ноябрĕн 3-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Ноябрĕн 3-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противникпа **Сталинград** районĕнче, **Туапсерен** çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тата **Нальчикран** кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре çапăçнă.

Ытти фронтсенче нимĕнле улшăнусем те пулман.

* * *

Сталинград районĕнче пирĕн войскăсем, противникăн атакисене сирсе пăрахса, йышăннă позицисене çирĕплетнĕ. Заводсен районĕнче кĕрешекен гвардейски часть нимĕçсене темиçе çуртран хĕссе кăларнă. Хулан кăнтăр хĕрринче пирĕн боецсем нимĕçсен 200 салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ, миноментсен батарейине, 5 пулемета, 2 автомашинăна пĕтерсе тăкнă тата 2 блиндажа çĕмĕрнĕ. Пирĕн артиллери тата гвардеец-минометчиксем пенипе противникăн пехотине пĕр батальона çити сапаласа янă, пĕр пайне вĕлерсе пĕтернĕ, 13 пулемет, 2 оруди пĕтерсе тăкнă. Летчик-истребительсем лейтенант Показин тата сержант Остапов юлташсем нимĕçсен 3 самолетне персе антарнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре Н-ски чаçăн разведчикĕсем çĕрле противникăн окопĕсене çĕмĕрсе кĕнĕ те, 40 нимĕçе вĕлерсе пĕтернĕ, 2 пулемет тата радиостанци тытса илнĕ. Пирĕн минометчиксем, тăшманăн пехоти пухăнса тăнă çĕре персе, гитлеровецсене пĕр ротăна çити вĕлерсе пĕтернĕ, боеприпассем тиенĕ 5 лава тата 3 противотанковăй орудие пĕтерсе тăкнă.

* * *

Нальчикран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн войскăсем оборонăра тăрса йывăр çапăçусем туса пынă. Н-ски чаçăн подразделенийĕсем, противникăн 2 атакине сирсе пăрахса, 250 гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ, противникăн 2 танкне тата хăй тĕллĕн куçса çӳрекен туппине пĕтерсе тăкнă. Резервсем илсе пырса, нимĕçсем çакăнта виççĕмĕш хут атакăна кĕнĕ те, пысăк çухатусем тӳссе, пирĕн подразделенисене хĕсме пултарнă. Тепĕр участокра пирĕн пĕр соединенин чаçĕсем противникăн пехотине танксенчен татса уйăрнă. Пуçланса кайнă çапăçура нимĕçсенне 30 танка çити çĕмĕрнĕ.

* * *

Туапсерен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн боецсем, нимĕçсене çирĕплетнĕ позицисенчен хĕссе кăларса, ятсăр высотасен районне йышăнса илнĕ. Çав участокри çапăçура противникăн 250 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ, тыткăна илнисем пур.

* * *

Орел облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен отрядри партизансен группи противникăн икĕ эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Икĕ паровоз, войскăсем лартса пыракан 15 вагон тата хĕçпăшалсем тиенĕ 11 платформа çĕмĕрĕлнĕ. Вагонсен ванчăкĕсем айĕнче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 200 çынна çити пĕтнĕ. Тепĕр отрядри партизансем противникăн 128 салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ, нимĕçсен 41 салтакне тата 2 офицерне тыткăна илнĕ. Кунсăр пуçне партизансем боеприпассен 3 складне сирпĕнтерсе янă тата трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен фашистла мерзавецĕсем Белоруссин хăйсем тытса илнĕ районĕсенче совет гражданĕсене—тыткăна лекнĕ çар çыннисемпе мирлĕ çынсене—60 çынна персе пăрахнă. Нимĕçсем белоруссене Судет облаçĕнчи çар заводне, Карлсбадран инçех мар вырнаçса тăракан скерне, ирĕксĕрлесе илсе кайнă. Кунта вĕсене цехсем тăрăх уйăрнă та ĕçе тытăнма хушнă. Совет патриочĕсем: Германи çарĕ валли продукци туса кăларакан заводра ĕçлеме килĕшместпĕр, тесе пурте пĕр шухăш-кăмăллăн пĕлтернĕ. Гитлеровецсем тыткăнри çынсене хĕнесе пĕтернĕ тата апатсăр тăратса хăварнă. Анчах бандитсем совет çыннисен хурçă пек çирĕп хăватне хавшатма пултарайман. Нимĕçсем вĕсене тискеррĕн асаплантарса вĕлерессипе хăратнă, анчах çакă та пулăшман. Вара фашистла мерзавецсем совет патриочĕсене—Белорусси ĕççыннийĕсене тискеррĕн асаплантарса вĕлернĕ.

* * *

Голланди патриочĕсем нимĕçсен транспрот самолечĕн экипажне пĕтерсе тăкнă. Çав самолет Алькмартан инçех мар анса ларнă пулнă. Документсемпе хĕçпăшалсене тытса илсе, патриотсем самолета вут тĕртнĕ те тарса пытаннă.

Мĕнпур вăя—кĕрхи çĕртме туса пĕтерме

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ йышăннă тăрăх, ноябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа республикăра кĕрхи çĕртме туса пĕтерес тĕлĕшпе фронтри пек ĕçлемелли эрне пулса иртет. Çак ыйтупа ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ ĕнер районсен радиоперекличкине ирттерчĕ. ВКП(б) Улатăр райком секретарĕ Киреев юлташăн отчетĕнчен çакă курăнать: çак ĕçе тĕрĕс организацилесен тата ăна тума партипе совет активне мобилизацилесен, пирĕн мĕнпур районсем çитес çывăх вăхăтрах кĕрхи çĕртме туса пĕтермелле.

Кĕрхи çĕртме тăвас тĕлĕшпе Улатăр районĕ кая юлса пыракан районсенчен пĕри шутланатчĕ. Октябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне кунта кĕрхи çĕртме планне 40 процентран ытла мар тултарнăччĕ, ноябрĕн 2-мĕшĕ тĕлне вара задание 80 процент тултарнă. Районра çак ĕçе 14 колхоз вĕçленĕ. Колхозсем халĕ кĕрхи çĕртмене ӳссе пыракан хăвăртлăхпа тăваççĕ. ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕ çак ĕçе ирттерме партипе совет активне мобилизациленĕ. Коммунистсемпе комсомолецсем суха ĕçĕнче пример кăтартаççĕ. ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Киреев юлташ: çĕртме тăвас тĕлĕшпе государство панă задание район çитес 3—4 кун хушшинче тултарать, тесе шантарса каларĕ.

Кĕрхи çĕртме тăвас плана пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе Канаш районĕ республикăра малти вырăнсенчен пĕрине йышăнать. Район çак ĕçе ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне тултарма пултарнă. Анчах парти райкомĕпе райсовет исполкомĕ юлашки вăхăтра çак ĕç хăй тĕллĕн пулса пырасса шанса ларнă. Районра сухаламасăр 500—600 гектар çеç юлнă. Районри лашасен хисепĕнчен 40 процентĕпе усă курсан, çак çĕр лаптăкне пĕр-икĕ кун хушшинче сухаласа пĕтерме пулать. Анчах ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Антоновпа райисполком председателĕ Ярандайкин юлташсем каланă тăрăх, кунта кĕрхи çĕртме тума васкаманни курăнчĕ. Ноябрĕн 2-мĕшĕнче, сăмахран, районра пĕтĕмпе те 46 гектар çеç сухаланă. Малашне те çавăн пек хăвăртлăхсемпе ĕçлесен, малта пыракан район республикăра кайра пыракан районсен шутне лекме пултарать.

Советски район та кĕрхи çĕртмене çителĕксĕр хăвăртлăхпа тăвать. Октябрĕн 31-мĕшĕнче кунта 1.200 лаша вырăнне 217 лаша çеç ĕçленĕ, ноябрĕн 2-мĕшĕнче 1.700 лаша вырăнне 740 çеç ĕçленĕ. Чылай колхозсенче туртăм вăйĕ ĕççĕр тăрать, ĕç тухăçлăхĕ калама çук пĕчĕккĕ. ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Никитин, райисполком председателĕ Малинин юлташсем ĕç çакăн пек пынипе килĕштерсе пурăнаççĕ. Районри парти активĕпе ялсенчи коммунистсене кĕрхи çĕртме тунă çĕре мобилизацилемен.

Кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе хăвăртлатас тесе ВКП(б) Ишлей райкомĕн секретарĕ Сидоровпа райисполком председателĕ Херсонов юлташсем те нимĕнле татăклă мерăсем те йышăнман. Районра татах та 4.500 гектар ытла сухаламалла.

— Халĕ ĕнтĕ плана тултарасси çанталăк мĕнле тăнинчен килет пулĕ,— тет Сидоров юлташ.

Кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе Çĕрпӳ, Кувакински, Красноармейски, Йĕпреç тата ытти районсем те çителĕксĕр ертсе пыраççĕ.

Çак питех те кирлĕ ĕç республикăра мĕнле пулса пынине хакласа, радиоперекличка вĕçленес умĕн ВКП(б) Обком секретарĕ Чарыков юлташ тухса каларĕ.

Кĕрхи çĕртме тăвас ĕç çителĕксĕр хăвăртлăхпа пулса пынине, — терĕ вăл,—парти райком секретарĕсемпе райисполком председателĕсем: халĕ колхозсем авăн çапас тĕлĕшпе тата заготпунктсене ялхуçалăх продукчĕсем турттарас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ, тесе ăнлантарса пама пăхаççĕ. Çакă вăл пĕрре те ĕнентерӳллĕ мар.

Чарыков юлташ асăннă районсем авăн çапас тĕлĕшпе те, государствăна тырпул леçес тĕлĕшпе те юлса пынине кăтартакан цифрăсем илсе кăтартрĕ. Апла пулсан, тĕп сăлтав лашасем урăх çĕрте ĕçленинче мар, сăлтавĕ пачах та урăххинче: чылай районсем СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ колхозсенчи мĕнпур туртăм вăйĕнчен 40 процентне кĕрхи çĕртме тунă çĕрте усă курмалла тесе кăтартса панине пурнăçламан. Чылай районсенче парти, комсомол тата совет активне çак мероприятисене ирттернĕ çĕре мобилизацилемен. Райкомсемпе райсовет исполкомĕсем тата райзо работникĕсем колхоз руководителĕсене ку тĕлĕшпе начар пулăшаççĕ. Советски районра, сăмахран, колхоз председателĕсене вырăнта пулăшу парас вырăнне, вĕсене район центрне час-часах чĕнсе ĕçрен уйăраççĕ.

Чарыков юлташ районсенчи мĕнпур коммунистсемпе комсомолецсене, совет работникĕсене кĕрхи çĕртме туса пĕтерес ĕçе мобилизациленме чĕнчĕ. Вĕсем колхозсен уйхирĕсенче председательсемпе тата бригадирсемпе алла-аллăн çыхăнса ĕçлемелле, ытти колхозниксене ĕçре пример кăтартмалла. Ĕç тухăçлăхне хăпартас тесен, кашни сухаçа уйрăм лаптăк палăртса памалла, ĕçленĕ çĕртех вĕри апат çитермелле.

Октябрь уявĕччен шутлă кунсем юлчĕç. Çак историллĕ куна эпир кĕрхи çĕртме тăвас тĕлĕшпе тăван çĕршыв панă задание пĕтĕмпех пурнăçланипе кĕтсе илме тивĕçлĕ. Çак задачăна пурнăçлас тесен, лашасене суха тунă çĕре кӳлмелле. Кĕрхи çĕртме тăвас плана республика мĕнле пулсан та тултармалла.

Республикăри колхозсем кĕрхи çĕртме тăвас тата авăн çапас ĕççене ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне мĕнле туса пынине кăтартакан

СВОДКА

(процентпа)

Районсем	Кĕрхи çĕртме тунă	Авăн çапнă (комбайнпа вырнине шута илсе)
Канаш	88,2	76,2
Сĕнтĕрвăрри	83,7	70,3
Вăрнар	83,0	71,9
Сĕнтĕр	77,6	76,5
Çĕмĕрле	75,4	74,0
Шăхасан	74,8	84,4
Етĕрне	74,7	65,9
Улатăр	74,2	67,3
Калинин	72,5	69,1
Шăмăршă	65,9	78,8
Октябрьски	65,1	60,8
Хĕрлĕ Чутай	65,1	69,4
Елчĕк	64,4	58,7
Шупашкар	64,6	82,3
Чкаловски	64,1	63,6
Первомайски	63,3	77,4
Вăрмар	63,2	67,0
Комсомольски	61,6	74,0
Çĕрпӳ	60,1	75,4
Тăвай	60,1	66,4
Элĕк	59,8	76,7
Куславкка	57,6	61,9
Красноармейски	57,2	72,3
Советски	53,7	53,7
Йĕпреç	50,1	80,0
Ишлей	46,6	80,3
Пăрачкав	41,8	83,3
Кувакино	38,6	81,1
Шупашкар хули	100,1	76,8
ЧАССР тăрăх	63,7	71,9
Октябрĕн 25-мĕшĕнче пулнă	52,1	68,0

Ем. Ярославский

СССР вăрçăпа тĕрĕслениие тÿссе ирттерчĕ

ССР Союзĕнчи халăхсем Октябрьти социализмлă Аслă революци 25 çул тултарнине нимĕç оккупанчĕсене хирĕç хаяр çапăçу пынă кунсенче кĕтсе илеççĕ. Эпир хамăрăн мĕнпур вăйсене гитлерла йыткĕтĕвĕсене отпор панă çĕре, фашистла Германие çапса аркатнă çĕре хуратпăр. Анчах та эпир хамăр шухăшра Росси çинче Советсен çĕнтерÿллĕ Хĕрлĕ Ялавĕ вăркăшма тытăннă геройла кунсем еннелле çаврăнса пăхатпăр. Совет государстви 25 çул пурăнни мĕнпур тĕнчери ĕççыннисен аслă çĕнтерĕвĕ пулса тăрать. Государствăн çĕнĕ формине, мĕнпур çынсене творчествăллă ĕçе пĕрлештермелли çĕнĕ форма тупнă. Обществăн çакă çĕнĕ стройне, Советсен влаçне, эпир хамăрăн ĕненĕвĕн мĕнпур хăватне хурса, хамăрăн тăван çĕршывпа хамăрăн халăха мĕнпур чĕререн юратса хÿтĕленĕ, хÿтĕлетпĕр те.

25 çул хушшинче утса тухнă çул çине çаврăнса пăхсан, Совет государствин кашни гражданинĕ тата ытти çĕршывсенчи кашни ĕççынни çакна курать: пурнăçа кĕртме май çук пек туйăнни, ĕмĕт пек кăна курăнни чăнлăх пулса тăчĕ. Этемлĕхĕн чи лайăх çыннисем ĕмĕтленни, çак 25 çул хушшинчи çулйĕр йывăр асапсем урлă, граждан вăрçипе интервенци çулĕсем урлă, империализмлă пĕрремĕш вăрçăпа граждан вăрçинче арканнă хуçалăха ура çине тăратас тĕлĕшпе ĕçленĕ йывăр çулсем урлă выртать пулин те, совет стройĕ пулса пĕтĕççе пурнăça кĕчĕ. Социализм татăклăн çĕнтерес çул çĕнĕ стройăн шалти тата тулашри тăшманĕсемпе кĕрешмелли йывăр çулсем урлă каçать.

Анчах та çак иртнĕ 25 çул йывăрлăхсене çĕнтернĕ çулсем кăна мар пулнă. Çак чĕрĕк ĕмĕр хушшинче пирĕн халăх творчествăн аслă савăнăçне, аталантарулла çĕнĕ савăнăçне, хăйĕн вăйĕсем чечекленсе аслă çитĕнÿсем тунине курчĕ. ССР Союзĕнчи халăхсем çак 25 çул хушшинче вĕсен хул-çурăмĕсем çинче хăватлă çунатсем ÿссе çитĕннĕ пек туяççĕ: çав çунатсем вĕсене империализмлă пĕрремĕш вăрçăн юнĕпе пылчăкĕнчен, патша империйĕн ишĕлчĕкĕсем хушшинчен, хăрушла арканчăк хушшинчен социализмлă ĕçĕн пĕрремĕш, анчах та хăватлă çитĕнĕвĕсем патне çĕкленме, социализмлă обществăна тунă çĕре çĕкленме май пачĕç.

* * *

Совет государствин тулашри политики мĕнпур 25 çул хушшинче мире сыхласа хăварас тата мĕнпур çĕршывсемпе суту-илÿ çыхăнăвĕсене аталантарас политика пулнă. ССР Союзĕ кама та пулин хăратма е уйрăмах тата кама та пулин тапăнма шухăшламан. ССР Союзĕ миршĕн çирĕппĕн тăнă, мир ĕçне хÿтĕленĕ. Совет Союзĕ, вăрçа сирсе ярас тесе, мире сыхласа хăварас тесе, мĕн кирлине пурне те тунă, анчах çакăнпа пĕрлех, Совет государстви хăйне империалистла тискер кайăксем тапăнма пултарассинчен хÿтĕленес тĕлĕшпе мĕн кирлине пурне те тунă.

Совет правительствин тулашри политики çакăн пек пулнă ĕнтĕ.

Анчах, Совет правительстви никама та вăрçăпа хăратман пулин те тата мире сыхласа хăварас тесе 1939 çулта Германи правительствипе договор тунă пулин те, ССР Союзĕ вăрçăран пăрăнса юлма пултараймарĕ. Империалистсен сăнчăрти чи тискер йыттисем—гитлеровецсем, Германи фашисчĕсем—1941 çулти июнĕн 22-мĕшĕнче Советсен çĕршывĕ çине ирсĕррĕн те ултавлăн тапăнчĕç.

Наполеон Бонапарт Росси çине тапăннăранпа 129 çул иртсен, Германи войскисен 170 дивизийĕ, малтанах хатĕрлесе мобилизацилесе тăратнăскерсем, çур Европăна çаратса пуç тÿпинчен пуçласа ура тупанне çитиччен вăрçăн çĕнĕ техникипе, танксемпе, самолетсемпе хĕçпăшалланнăскерсем, Совет Союзĕн чикки урлă каçрĕç те, Наполеон тахçан ĕлĕк-авал килнĕ кивĕ çулсем тăрăх Мускав çинелле куçма тытăнчĕç. Çакă вăл 1917 çулти Октябрь хыççăн Германи империалисчĕсем пуçаракан иккĕмĕш интервенци—тĕнчери пĕрремĕш социализмлă государствăна хирĕç пуçарнă интервенци пулчĕ. Ĕлĕк-авал Наполеон Российăна хирĕç çур миллионран ытларах çар кĕртсе янă. Гитлер, хăйĕн ирсĕр тарçисен—итальянецсен, румынсен, венгерсен, финсен тата ыттисен çарĕсене пĕрле шутласан,—ССР Союзне хирĕç темиçе миллион çын хăваласа килчĕ. ССР Союзне хирĕç вăл хăй пуçпулса тăнă çулсенче пухнă хăрушла вăрçă техникине, бронетанкăвăй дивизисене, çавтери пысăк йышлă авиацине моторизациленĕ пехотăпа кĕртсе ячĕ. ССР Союзне хирĕç вăл фашистла ирсĕр пропагандăпа иртĕхсе кайнă хăйĕн çаратуçă-çарне, хăйне çĕнтерекенни никам та çук тесе шутлакан çарне кĕртсе ячĕ.

Кĕтмен çĕртен тапăннине пула, çавăн пекех малтанхи вăхăтра танксемпе авиаци тата ытти тĕрлĕ хĕçпăшалсем тĕлĕшпе вăйлăраххине пула, нимĕçсем Совет территорийĕ çине шала кĕрсе кайма пултарчĕç. Пирĕн мĕнпур çĕршыв, пĕр çын пек пулса, тăшмана хирĕç çĕкленчĕ. Мирлĕ ĕç хатĕрĕсем вăрçă хатĕрĕсемпе улшăнчĕç. Творчествăллă, аталантарулла аслă ĕç вăхăтлăха татăлчĕ.

Гитлерла йытă-кĕтĕвĕсем пирĕн çĕршывăн хăйсем оккупациленĕ облаçĕсене хăрушла ишĕлтерсе, çаратса пĕтерчĕç. Миллионшар совет çыннисем вăхăтлăха гитлерла чи йывăр чуралăха кĕрсе ÿкрĕç. Анчах пирĕн Совет влаçĕ пулнă пирки, Совет влаçĕ паттăр çынсен ăруне, социализмлă ĕçĕн чăн-чăн геройĕсен тата тăшманшăн аçа-çиçĕм пулса тăракан вăрçă геройĕсен ăруне пăхса çитĕнтернине пула, хăй 25 çул пурăннă хушăра Советсен çĕршывĕ хăватлă вăй пухса çитернине пула,—çакна пула ĕнтĕ Хĕрлĕ Çар тăшмана хăватлăн пыра-пыра çапма пултарать. Çавăнпа та эпир, Совет государстви 25 çул хушши пурăнса ирттернин итогĕсене чи хаяр вăрçă условийĕсенче пĕтĕçтерсе, хамăр çĕнтерессине шанса тăратпăр.

Пирĕн çĕршывăн çавтери пысăк тĕрĕслÿ витĕр тухма лекрĕ. Совет стройĕн, ССР Союзĕнчи рабочисемпе хресченсен тата социализмлă интеллигенцин союзĕн тĕрĕслÿ витĕр тухма лекрĕ; Совет Союзĕнчи халăхсен аслă туслăхĕн тĕрĕслÿ витĕр тухма лекрĕ. ССР Союзĕн мĕнпур экономикин, пĕтĕм халăх хуçалăхĕн, унăн социализмлă индустрийĕн, унăн коллективлă ялхуçалăхĕн тĕрĕслÿ витĕр тухма лекрĕ. Пирĕн хĕçпăшаллă вăйсен тĕрĕслÿ витĕр тухма лекрĕ.

ССР Союзĕ çав тĕрĕслеве чыслăн тÿссе ирттерчĕ. ССР Союзĕн Правительстви тĕнчери чи çирĕп правительство пулчĕ. Рабочисемпе хресченсен тата социализмлă интеллигенцин союзĕ иксĕлми çирĕп пулчĕ. ССР Союзĕнчи халăхсен Ленинпа Сталин пĕтĕçтернĕ аслă туслăхĕ иксĕлми çирĕп тата тăшманшăн хăрушă союз пулса тăчĕ. Совет государствин хăватлă хуçалăх системи—унăн хăватлă индустрийĕ, унăн социализмлă коллективлă ялхуçалăхĕ тĕрĕслеве тÿссе ирттерчĕ. Тăшман çавтери пысăк территори йышăнчĕ пулин те, Хĕрлĕ Çар тăшмана çĕнтерме мĕн кирлине илчĕ тата халĕ те илсе тăрать.

Совет Союзĕн çар организацийĕ те тĕрĕслеве тÿссе ирттерчĕ. Хĕрлĕ Çар нимĕçсен, румынсен, венгерсен, итальянецсен, финсен салтакĕсемпе офицерĕсене миллионшарăн пĕтерсе тăкма кăна мар, вĕсен çарне чылай поражени кÿме те пултарчĕ.

Гитлерла Германин ССР Союзне «çиçĕм пек» хăвăртлăн тытса илмелли планĕсем путланса ларчĕç. Гитлерăн ССР Союзне ытти мĕнпур халăхсенчен уйăрса пĕччен тăратса хăварас, Советсен çĕршывне хирĕç мĕнпур капиталистла çĕршывсене тăратас планĕсем путланса ларчĕç, унăн ССР Союзне хирĕç хĕреслĕ поход организацилес планĕсем пĕтсе ларчĕç. Пачах та урăхла килсе тухрĕ. Гитлер хăй ытти халăхсенчен уйăрăлса пĕччен тăрса юлчĕ. Гитлерла Германипе унăн «союзникĕсем» текенскерсене хирĕç демократиллĕ çĕршывсен—ССР Союзĕн, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен тата Англин союзĕ пулса тăчĕ.

Сталин юлташ 1941 çулти ноябрĕн 6-мĕшĕнче ĕççынни депутачĕсен Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче каланă историллĕ сăмаха пурте лайăх асра тытаççĕ. Совет государстви 24 çул пурăнса ирттернине тата отечественнăй вăрçăн малтанхи тăватă уйăхне итог туса пĕтĕçтерсе, Сталин юлташ гитлерла Германин планĕсем путланса ларнине уçăмлăн кăтартса пачĕ. Çав сăмахрах Сталин юлташ пирĕн çарăн ĕçĕсем вăхăтлăха ăнăçсăр пулнин сăлтавĕсене те уçса пачĕ тата çав сăлтавĕсене мĕнле майсемпе пĕтерсе пымаллине кăтартса пачĕ. Вăл тăшманăн вăйĕсем майĕпен пĕтсе пынине, ССР Союзĕн вăйĕсем вăрçă пынă май ÿссе пынине кăтартса пачĕ.

Тепĕр ирхине 1941 çулти ноябрĕн 7-мĕшĕнче Сталин юлташ Хĕрлĕ площадьре, Хĕрлĕ Çарăн парадĕнче, сăмах тухса каларĕ. Çав сăмахра Сталин юлташ пирĕн кĕрешĕвĕн аслă пĕлтерĕшне кăтартса пачĕ, вăл эпир хÿтĕлекен идейăпа культурăн аслă наследийĕ çинчен каларĕ.

Сталин юлташăн 1941 çулти ноябрĕн 6-мĕшĕнче тата ноябрĕн 7-мĕшĕнче каланă çав икĕ сăмахĕ, унăн 1941 çулти июлĕн 3-мĕшĕнче радио тăрăх тухса каланă сăмахĕ пекех, совет халăхĕ туса пыракан отечественнăй вăрçă историне, тĕнчери историне çав тапхăрти чи пысăк вырăн йышăнса тăракан, чи аслă та вăйлă документсем пулса кĕрсе юлаççĕ. Сталин юлташăн чĕнĕвĕ тăшмана хирĕç пыракан кĕрешÿре пирĕн вăйсене ÿстерчĕ. Нимĕçсем оккупациленĕ çĕршывсенчи халăхсене вăл фашистла захватчиксене хирĕç пĕр хĕрхенмесĕр кĕрешме хавхалантарчĕ, вăл ССР Союзĕн пĕтĕм тĕнчери çыхăнăвĕсене çирĕплетрĕ, вăл демократиллĕ çĕршывсен фашизма хирĕçле коалицине татах та ытларах çирĕплетрĕ.

Сталин юлташăн чĕнĕвĕ çине ответлесе, фронта çĕнĕрен-çĕнĕ полксем тухса кайрĕç, Ленинăн—Сталинăн мухтавлă ялавĕпе хавхаланнăскерсем, вĕсем тăшмана аркатса пĕтерсе пычĕç. 1941 çул хĕлле Хĕрлĕ Çар отечественнăй вăрçă фронтĕнче татăклă улшăну тума пултарчĕ. Ун чухне тăшмана чарса лартса, сирсе ыватнăччĕ. Çакна манма юрамасть: ун чухне фронт таврашĕнчи районсенчен куçаракан заводсем çул çинче пулнă-ха, пирĕн промышленность ун чухне Гитлерăн вăрçă машинине пĕтĕмĕшпех çапса аркатмалăхах хĕçпăшалсемпе боеприпассем пама пултарайман-ха.

1942 çулти çуркунне лару-тăру йывăрланчĕ. Европăра иккĕмĕш фронт уçмарĕç. Гитлер, хăйне хĕвеланăçĕнчен войскăсем хăратса тăманнипе уса курса, хăйĕн мĕнпур войскисене Совет Союзне хирĕç кĕртсе ячĕ. Ку хутра вăл 1941 çулти пек пĕтĕм фронтра мар наступлени туса пычĕ, хăйĕн мĕнпур вăйĕсене вăл ССР Союзĕн кăнтăрти тата кăнтăр-хĕвелтухăçĕнчи енĕсене кĕртсе ячĕ. Вăл Крыма йышăнса илме, Донбаса оккупацилеме, Çурçĕр Кавказăн пĕр пайне йышăнса илме, Сталинград патне çитме пултарчĕ.

Гитлер хăй пуçарса янă ăссăр та юнла çак вăйăра мĕнпурне йăлтах карттă çине лартрĕ.

Совет халăхĕпе унăн Хĕрлĕ Çарĕ, çулталăк çурă вăрçса, мĕнпур йывăрлăхсене тÿссе ирттерме ĕлĕкхинчен те ытларах вĕренсе çитрĕç. Хĕрлĕ Çар тăшмана хаяррăн кураймн пулма тата тăшманпа хире-хирĕç тăрса пĕччен вăйлăн кĕрешме вĕренсе çитрĕ. Совет халăхĕн моральлĕ-политикăллă пĕрлĕхĕ, фронтпа тылăн пĕрлĕхĕ татах та ытларах çирĕпленчĕ. Çакна ăна 1942 çулти Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту ĕнентермеллех кăтартса парать. Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту ĕç тухăçлăхне татах та ытларах ÿстерчĕ, хĕçпăшалсемпе боеприпассем туса кăларассине, вăрçă вăрçма мĕн кирлине пурне те туса кăларассине вăйлатма май пачĕ.

Совет Союзне унăн мĕнпур халăхĕсем хÿтĕлеççĕ. ССР Союзĕнчи халăхсем çакна лайăх пĕлеççĕ: отечественнăй аслă вăрçă пуçĕнче, Октябрьти социализмлă Аслă революци чухнехи пекех, хăватлă та паттăр вырăс халăхĕ тăрать, совет халăхĕн мĕнпур кĕрешĕвне большевиксен партийĕ, Сталин юлташ ертсе пырать. Совет Союзĕнчи халăхсем хăйсен вăйĕсене хĕрхенмесĕр кĕрешеççĕ, вĕсем çĕнтерĕве шанаççĕ. Çĕнтерессине шанни вăл—çур çĕнтерÿ. Эпир туса пыракан кĕрешÿ тĕрĕслĕхлĕ кĕрешÿ пулнине шанса ĕненни, çак кĕрешÿре мĕнпур халăх пулăшса пынине шанни—çур çĕнтерÿ пулса тăрать.

Халĕ Ленинградшăн, Çурçĕр Кавказшăн, Новороссийскшăн, мухтавлă Сталинград хулишĕн хаяр кĕрешÿ пырать: кунта пирĕн социализмлă тăван çĕршывшăн, мĕнпур малта тăракан этемлĕхшĕн кĕрешÿ пырать.

Сталинградшăн ĕнтĕ виçĕ уйăха яхăн кĕрешÿ пырать: нимĕçсем малтан Сталинграда йышăнни çинчен пĕлтерчĕç, унтан вара радио тăрăх тата хаçатсенче Сталинграда йышăнас ыйту—çывăх кунсенчи ĕç пулса тăрать тесе темиçе хутчен те пĕлтерчĕç. Анчах та Сталинград патĕнче Германин нумай дивизийĕсене пĕтерсе тăкнă та ĕнтĕ, паян вара, Октябрь уявĕ çитес умĕн эпир çакăн çинчен çырнă чухне, Сталинград Совет влаçне малалла геройла хÿтĕлесе тăрать. Вăл иксĕлми çирĕп, вăл—малтанхи пекех герой-хула, çĕршывăн крепоçĕ. Сталинград патĕнче Гитлерăн войскисем армийĕ-армийĕпе пĕтрĕç те ĕнтĕ. Гитлеровецсем 28 кун хушшинче Польшăна çĕнтерсе илме пултарчĕç, Сталинградра вара вĕсене пĕр урамран тепĕр урама çитиччен куçма та 28 кун кирлĕ пулчĕ. 33 кун хушшинче нимĕçсем Франци çапса аркатрĕç, Сталинград патĕнче вара вĕсем икĕ уйăх хушшинче те çĕнтерÿ тăваймарĕç. Çакăнта ĕнтĕ Хĕрлĕ Çарăн вăйĕ ÿсни палăрса тăрать. Çакăнта ĕнтĕ мĕнпур совет халăхĕн вăйĕ палăрса тăрать. Çакăнта ĕнтĕ Совет государстви 25 çул хушши пурăннин результачĕсем палăрчĕç. Çакăнта ĕнтĕ Октябрьти социализмлă революцин аслă хăвачĕ палăрчĕ.

* * *

Нимĕçсен тылĕнчи, Совет Союзĕн нимĕçсем оккупациленĕ облаçĕсенчи партизанла кĕрешÿ отечественнăй вăрçăра питех те паха фактор пулса тăрать. Партизанла движени ÿссе сарăлса пырать, вăл ĕнтĕ калама çук пысăк çитĕнÿсем турĕ. Çав çитĕнÿсене халĕ чуххăмăн та шута илме çук-ха. Çакă кăна паллă: тăшманăн тылĕнче партизансем туса пыракан чăн-чăн халăх вăрçи тăшмана хăвăртрах çапса аркатма, пирĕн тăван çĕршыва фашистла ирсĕрсенчен хăвăртрах ирĕке кăларма пулăшать.

Нимĕçсем, Белоруссие оккупацилесе, ăна Белорутени тесе ят панă, унтан вара хĕвеланăçĕнчи тăватă облаçран «Ост-зюд-прейссен» ятлă провинци туса хунă, урăхла каласан, çакă вăл пусмăрлăха кĕртсе ÿкернĕ провинци пулса тăрать. Анчах та Белорусси «Ост-зюд-прейссен» ятлă колони пуласшăн мар, вăл ирĕклĕ совет Белоруссийĕ, ССР Союзĕнчи халăхсен тăванĕсенчен пĕри пуласшăн. Нимĕçсем Белоруссире терорла тискер ĕçсем тунине хирĕç ответлесе пĕтĕм халăхăн партизанла вăрçи вăйлансах пырать. Партизанла вăрçă Украинăра, Балтика таврашĕнчи çĕршывсенче, Çурçĕр Кавказра сарăлса пырать.

Партизансем тăшмана калама çук вăйлăн пыра-пыра çапаççĕ. Нимĕçсен командованийĕн Германи çарĕшĕн партизанла движени питех те пысăк хăрушлăх пулса тăнине хăйĕннех ирĕксĕрех йышăнма лекст.

Партизанла движени Ленинград облаçĕнче çав тери анлăн сарăлса кайнă, унта партизансем районĕ-районĕпе хăйсен аллинче тытса тăраççĕ. Орел, Смоленск облаçĕсенчи партизансем те чаплăн кĕрешеççĕ. Тăшманăн тылне анакан Хĕрлĕ Çар десанчĕсем пулăшнипе партизансем нимĕçсен штабĕсене кăна мар аркатаççĕ, çавăн пекех тата районĕ-районĕпе нимĕçсенчен ирĕке кăлараççĕ. Иккĕленмелли çук, вăрçăн çĕнĕ тапхăрĕнче, иккĕмĕш фронт уçăлсан тата Хĕрлĕ Çар пысăкрах хăвăртлăхсемпе малалла куçма тытăнсан, партизанла движени, пирĕн çĕршыва оккупантсенчен тасатса пырса, уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăрĕ.

* * *

Отечественнăй вăрçăн пур фрончĕсенче те юн тăканакан çапăçусем пыраççĕ. Хамăрăн çĕршыва гитлерла ирсĕрсенчен тасатас тесен, хамăрăн çĕршыври халăхсене хăратса тăракан чуралăхран хăтарас тесен, гитлеровецсене çĕр çинчен шăлса пăрахас тесен, нумай вăй хурса кĕрешмелле-ха, нумай жертвăсем тÿсмелле. Анчах халĕ, совет халăхĕ хăйĕн тăшманĕсене хирĕç вăрçакан отечественнăй иккĕмĕш вăрçăра тунă çитĕнÿсем те тăшмана çапса аркатассине, çĕнтерÿ пирĕнте пулассипе тарăнăн шанса тăма май параççĕ.

Çав çĕнтерĕве пĕтĕмĕшпех алла илес тесен пирĕн мĕн кирлине пурне те тумалла. Пирĕн хамăрăн çĕре этемлĕхĕн тискер тăшманĕсенчен яланлăхах тасатмалла, мире юратакан совет халăхне хирĕç ÿлĕм никам та вăрă-хурахла аллине нихăçан та çĕклеме ан пултартăр. Эпир вăрçăшăн пулман. Анчах та пирĕн хамăрăн халăха тăтăшах мирлĕн ĕçлемелли условисем туса памалла; хамăр халăхăн мĕнпур вăйĕсене чечеклентерессишĕн, унăн материальнăй тата культурăллă пусăмне пур енĕпе татах та ытларах çĕклессишĕн эпир çавна кирек мĕнле пулсассăн та çĕнтерсе илетпĕрех.

Паян, хамăрăн тăван çĕршыва хÿтĕлесе çапăçу хирĕнче нумай çынсем пĕтеççĕ пулсан та, эпир çакна лайăх пĕлетпĕр: эпир тĕрĕс ĕçшĕн кĕрешетпĕр, эпир хамăрăн çĕршыва чи тискер тăшманран тасататпăр. Эпир ирĕклĕ çĕр çинчи совет çыннисен ирĕклĕ пурнăçĕшĕн кĕрешетпĕр. Халĕ тăшмана хирĕç кĕрешнĕ çĕре паракан хамăрăн мĕнпур хастарлăха эпир, вăрçă кÿнĕ сурансене хăвăртрах сиплес тесе, Совет государствин çĕнĕ 25 çуллăхĕ аталанăвăн çĕнĕ тапхăрĕ пулса тăтăр тесе, пĕтĕмпех строительство ĕçне, хуçалăха ура çине тăратас ĕçе хурăпăр.

Эпир çак вăрçăра мĕнпур тĕнчере миллионшар туссем тупрăмăр. Хĕрлĕ Çар хăйĕн çĕршывĕн ирĕклĕхне кăна мар, вăл çавăн пекех тата гитлеровецсем пусмăрлăха кĕртсе ÿкернĕ мĕнпур халăхсен, фашизм пуçпулса тăрасси хăратса тăракан мĕнпур халăхсен ирĕклĕхĕпе пурнăçне тата чыслăхне хÿтĕлет. Гитлеризма хирĕç кĕрешнĕ çĕрте малта пыракан мĕнпур прогрессивнăй этемлĕх пирĕнпе пĕрле.

Октябрьти социализмлă Аслă революцире тунă аслă çĕнтерÿсене, Совет влаçĕн 25 çулĕ хушшинче тунă çĕнтерÿсене эпир хамăрăн ĕç çĕнтерессине тарăнăн шанса тăрса хÿтĕлетпĕр. Ленин—Сталин партийĕн ялавĕ айĕнче, пирĕн партин аслă çулпуçĕ, социализмлă революцин организаторĕпе çулпуçĕ—Сталин юлташ ертсе пынипе эпир çĕнтерÿ патнелле утатпăр.

ĔÇ ТУХĂÇЛĂХĔ ÿСЕТ

ÇĔМĔРЛЕ, ноябрĕн 3-мĕшĕ. (Телефонпа). Комбинатри рабочисемпе работницăсем, Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва вăйлатса пырса, куллен çĕнĕ çитĕнÿсем тăваççĕ. Вĕсем хушшинче халĕ двухсотниксемпе трехсотниксем çĕршерĕн шутланаççĕ. Стахановка Миночкина юлташ, октябрь уйăхĕнчи задание 365 процент тултарса, çĕнĕ çитĕнÿ турĕ. Çавăн пекех иртнĕ уйăхри нормăна стахановка Герасимова юлташ 300 процент, Барягина — 240 процент, Димитриев — 260 процент тата Большаков юлташ — 270 процент тултарнă.

Цехсем хушшинчи ăмăртура уйрăмах Петров юлташăн цехĕ мала тухрĕ. Вăл, октябрьте продукцие график тăрăх туса кăларса, плана 105 процент тултарчĕ. Ку цехра ĕç тухăçлăхĕ те ÿсрĕ тата продукцин хăйне ларакан хакĕ те йÿнелчĕ.

Юлашки вăхăтра комбинат коллективĕ электроэнергие перекетлес тĕлĕшпе улшăну турĕ. Ку таринччен электроэнергине 8.820 киловатт-сехет чухлĕ перекетленĕ.

Х. ЛИСИН.

Районсенчи парторганизацисен пухăвĕсем

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ.

Районри парторганизацин отчетпа суйлав пухăвĕ пулса иртрĕ. ВКП(б) райкомĕн ĕçĕсем çинчен ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Григорьев юлташ доклад туса пачĕ.

Районри парторганизаци отечественнăй вăрçă кунĕсенче хăйĕн мĕнпур ĕçне фронта вăйлăнрах пулăшса тăрас тĕлĕшпе район умĕнче тăракан задачăсене пурнăçлама ĕççыннисене мобилизацилес тĕллевпе туса пынă. Кăçал районри колхозсенчен чылайĕшĕ ялхуçалăх ĕçĕсене вăрçă чухнехи хăвăртлăхсемпе туса пыраççĕ. Иртнĕ çулсенче мĕнпур ĕçсенче юлса пынă Мăн Шетьмĕ, Итмар, Именево ялсовечĕсенчи тата Янчеллă, Тĕрер, Упи ялсовечĕсенчи колхозсем Октябрь уявне ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçленипе кĕтсе илеççĕ. Янчеллă ялсоветĕнчи «Победа», «Прогресс», «Новая жизнь» колхозсем кĕçех авăн çапса пĕтереççĕ, государствăна тырпул, аш-какай, сĕт-çу тата пахча-çимĕç продукчĕсем пĕтĕмĕшпех парса татнă, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пурнăçланă.

Пренире тухса каланă юлташсем ВКП(б) райкомĕн ĕçĕнчи çитменлĕхсене критиклерĕç. ВКП(б) райкомĕ кая юлса пыракан колхозсене çителĕксĕр пулăшса тăнă. Малта пыракан колхозсемпе колхозниксен творчествăллă çĕкленĕвĕпе районри мĕнпур колхозсенчи ĕçсен хăвăртлăхне ÿстернĕ çĕрте тивĕçлипе усă кураймн. Çавна пула район выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес, государствăна тыра тăратас, авăн çапас тата кĕрхи çĕртме тăвас тĕлĕшпе юлса пырать. Ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне районри колхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана майракаллă шултăра выльăхсем тĕлĕшпе 81 процент, сурăхсем тĕлĕшпе —71 процент, чăх-чĕп тĕлĕшпе—60 процент çеç пурнăçланă. Район авăн çапас плана та 73 процент, кĕрхи çĕртме планне 45 процент, государствăна 1942 çулшăн тĕш тыра памалли плана 61 процент çеç тултарнă. Ку тĕлĕшпе уйрăмах Шупуç, Хусаккасси т. ыт. ялсовечĕсем юлса пыраççĕ.

Пренире тухса калакансем ĕççынни депутачĕсен район Совечĕ ялсовечĕсене начар ертсе пынине палăртрĕç. Çавна пула чылай ялсовечĕсенче сессисем ирттерме пăрахнă. Упи ялсовечĕ, сăмахран, кăçалхи март уйăхĕ хыççăн пĕр сесси те ирттермен. 1942 çулта райсовет исполкомĕ хăй те икĕ сесси çеç ирттернĕ. Ялсоветсене ертсе пыма çĕнĕ çынсем хутшăннă, вĕсене ĕçре çителĕксĕр пулăшса тăнă.

ВКП(б) райкомĕ тата пуçламĕш парторганизацисем отчетлă тапхăрта партие илес ĕç çине тивĕçлипе çаврăнса пăхман. Районри парти организацийĕ вăрçăн 16 уйăхĕ хушшинче те парти ретне 41 çынна çеç илнĕ. Пуçламĕш парторганизацисенче чылайĕшĕнче партиллĕ-политикăллă тата партиллĕ-массăллă ĕçсене сÿрĕккĕн туса пыраççĕ. «Большевик» заводри, Чапаев ячĕпе тăракан колхозри пуçламĕш парторганизацисем отчетлă тапхăрта парти ретне илес тĕлĕшпе пачах ĕçлемен.

Пухура Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ З. А. Андреева юлташ тухса каларĕ. Вăл хăйĕн сăмахĕнче районри парти организацийĕ çывăх кунсенче пурнăçа кĕртмелли задачăсем çинчен каларĕ.

Пуху ВКП(б) райкомĕн составне суйларĕ. Пленум ВКП(б) райкомĕн секретарĕсем пулма Н. Григорьев, Н. Гладков тата Г. Томасов юлташсене суйларĕ.

И. ХАТАЕВСКИЙ.

* * *

ВĂРНАР.

Районри парти пухăвĕнче ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Сергеев юлташ парти райкомĕн 1940 çулти март уйăхĕнчен пуçласа кăçалхи ноябрĕн 1-мĕшне çитиччĕнхи тапхăрти ĕçĕсем çинчен доклад туса пачĕ.

Районри малта пыракан колхозсем ялхуçалăх ĕçĕсене вăрçă вăхăчĕ хушнă пек хăвăрт туса пыма тăрăшаççĕ. Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан, «Победа» тата «Гигант» колхозсем ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçленĕ. Авăн çапса пĕтернĕ, государствăна тыра тата ялхуçалăх продукчĕсем парса татнă, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плансене тултарнă.

Район 1942 çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне, лашасемсĕр пуçне, пур йышши выльăх-чĕрлĕхсем тĕлĕшпе те пурнăçланă, авăн çапмалли плана 72 процент, кĕрхи çĕртме планне 82 процент тултарнă.

Пренире 15 çын тухса каларĕç. Вĕсем ВКП(б) райкомĕ вырăнти промышленноçпа суту-илÿ предприятийĕсен ĕçĕсем çине тивĕçлипе çаврăнса пăхманнине палăртрĕç. Вырăнти топливо промышленноçĕн леспромхозĕ (директорĕ коммунист Пестов) çулталăкри плана 38 процент, «Труд» артель—44 процент çеç тултарнă.

Парти райкомĕ тата пуçламĕш парторганизацисем партие илес тĕлĕшпе те çителĕксĕр ĕçленĕ. Отчетлă тапхăрта парти ретне пурĕ 194 çынна илнĕ, вăл шутра парти членĕн кандидачĕсем 95 çын. Уйрăмах рабочисемпе колхозниксене, трактористсемпе комбайнерсене парти ретне илес ĕç сÿрĕккĕн пулса пынă. Отечественнăй аслă вăрçă пуçланнăранпа фосфорит завочĕпе МТС çумĕнчи, Уравăшри тата Хапăсри пуçламĕш парторганизацисем партие пĕр çынна та илмен.

Пренире тухса каланă юлташсем пуçламĕш парторганизацисенче партиллĕ-политикăллă ĕçе тата çамрăк коммунистсене вĕрентсе çитĕнтерессине сÿрĕккĕн туса пынине кăтартса пачĕç.

ВКП(б) райкомĕ тата унăн кадрсем тĕлĕшпе ĕçлекен секретарĕ колхозсенчи кадрсене çителĕксĕр пулăшса, ертсе пынă. Шанарпуç, Кивĕ Яххакасси, Пăваяль колхозĕсен председателĕсем ĕçсе çÿренĕ пирки ялхуçалăх ĕçĕсене сÿрĕккĕн ертсе пыраççĕ. Анчах вĕсене ку таринччченех тивĕçлĕ ответ тыттарман, çитменнипе тата вĕсем ку таринччченех ертсе пыракан ĕçсенче юлнă.

Пуху вĕçĕнче ВКП(б) Чăваш Обкомĕн вăрман промышленность енĕпе ĕçлекен секретарĕ Бобров юлташ сăмах тухса каларĕ.

Пуху ВКП(б) райкомĕн составне 19 çынран суйларĕ. Çав кунах ВКП(б) райкомĕн пленумĕ пулса иртнĕ. Пленум ВКП(б) райкомĕн секретарĕсем пулма С. К. Коротков, В. Багров тата Н. Иванов юлташсене суйланă.

Е. ВОЛКОВ.

Ют çĕршывсенче

ГИТЛЕР ЛАКЕЙĔ ФРАНЦИ РАБОЧИЙĔСЕНЕ ХĂРАТАСШĂН

ЖЕНЕВА, ноябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Виширан пĕлтернĕ тăрăх, промышленность производствин ыйтăвĕсене пăхса тăракан генеральнăй секретарь Бишлон Францирен рабочисене Германие ярас тĕлĕшпе Виши правительстви йышăннă мероприятисем çинчен ăнлантарса панă май çапла каланă: «Францин оккупацилемен районĕнчи рабочисен, Германие ĕçлеме каймашкăн килĕшмесен, йывăр ответ тытмалла пулать», тенĕ. Малалла Бишлон çапла каланă: «Францин оккупацилемен пайĕнчен Германие каясран пăрăнса юлнă кашни рабочишĕн оккупациленĕ зонăран тепĕр рабочи хушса ямалла пулать. Ун пек чух вăл рабочи çулсем тĕлĕшпе лешĕнчен нумаях аслă тата унăн çемьи те пысăк пулни çине пăхса тăмаççĕ», тенĕ.

ЕГИПЕТРИ ÇАПĂÇУСЕМ

ЛОНДОН, ноябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Англин Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен командованийĕ çапла пĕлтерет: ноябрĕн 1-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле противник Англи войскисене хăйĕн позицийĕсенчен хĕвелтухăçнерехри районра, чугунçулпа тинĕс çыраннĕ хушшинчи вырăнра, атакăлама хăтланнă. Англичансен пехоти хăй йышăнса илнĕ территорие тытса тăнă, анчах та противникăн темиçе танкĕ хăйсен уйăрăлса кайнă пехота чаçĕсемпе пĕрлешме пултарнă. Ĕнер противник кункаçиччен нимĕн те туман

Ĕнер ирхине Англи торпедоносецĕсем противникăн Тобрук гаванне кĕме хăтланнă икĕ суту-илÿ карапне путарнă.

ГОЛЛАНДИРЕ ДОБРОВОЛЕЦСЕМ ПУХАС ĔÇ ПАЧЛАНСА ЛАРНА

ОТТАВА, ноябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). «Националь цейтунг» ятлă гитлерла хаçат ирĕксĕрех йышăнса çапла çырать: нимĕçсем Голландире темĕн чухлĕ тăрăшсан та, Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронта ирĕккĕн кайма пулнă «добровольцсене» питех те сахал пухма пултарнă. Çавăн пирки Голландире хĕçпăшал тытма пултаракан арçынсене ирĕксĕрех пурне те çар службине илмелле йĕрке кăларасса кĕтеççĕ.

СТЮАРТ УТРАВĔ ПАТĔНЧЕ ПУЛСА ИРТНĔ ÇАПĂÇУ ÇИНЧЕН ТĔПЛĔН ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, ноябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен тинĕс министерстви кăларнă коммюникере çапла каланă: Стюарт утравĕнчен хĕвелтухăçнерехре (Соломон утравĕсен çурçĕр хĕвелтухăçĕнчи пайĕ) октябрĕн 26-мĕшĕнче пулса иртнĕ тинĕс çинчи тата сывлăшри çапăçура противника чылай пысăк сиен кÿнĕ. Японецсен «Дзуйкаку» йышши миноносецĕ çине, «Конго» йышши линкорĕ çине тата японецсен ытти суднисем çине те бомбăсем тĕл пырса ÿкнине палăртнă.

Коммюникере тата çакна кăтартса панă: çав çапăçура японецсенне 100 самолет ытла персе ÿкернĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Союзпечати требуются: бухгалтер, бухгалтер-ревизор, экспедитор и приемщики подписки.
Обращаться: Дом связи, 3-й этаж.

Покупаем тарантас, бричку и телеги. Звонить по телефону 7—46.
Техно-ткацкая фабрика.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чăбоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 11250 Типографи № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.